Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчене тухать

90 (8051) № ✻ Юн кун, 2012 ҫулхи чӳк (ноябрь) уйӑхӗн 21-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

## Кӑтартусем ӗҫлемесӗр пулмаҫҫӗ

Уй-хир ӗҫӗн паттӑрӗсем

Районти ҫӗр ӗҫченӗсем йывӑрлӑхсене ҫӗнсех аталану ҫулӗпе малалла пынине хӑш-пӗр хуҫалӑхсен тӗслӗхӗсенче те курма пулать. Ҫакӑн пеккисенчен пӗри вӑл – В. Андреев **(сӑн ӳкерчӗкре сылтӑмри)** ертсе пыракан Суворов яч. хис. ял хуҫалӑх производство кооперативӗ.

Районти ҫӗр ӗҫченӗсемпе ял хуҫалӑх продукцине тирпейлекен промышленноҫра вӑй хуракансен савӑнӑҫлӑ уяв пухӑвӗнче асӑннӑ хуҫалӑх ӗҫченӗсем нумай енпе чыссӑр юлмарӗҫ. Вӗсем **(сӑн ӳкерчӗкре сулахайран сылтӑмалла)**: Александр Юрьевич Архипов механизатор, Радонеж Виссарионович Кузнецов комбайнер, Андрей Юрьевич Архипов водитель, ӗнесене машинӑпа сӑвакан оператор Фаина Юрьевна Антонова, механизацилентӗ бригадӑна ертсе пыракан Геннадий Аверкиевич Викторов. 2012 ҫулхи вырмара ял хуҫалӑх предприятийӗсен механизаторӗсем, механизациленӗ тата уй-хир бригадисем хушшинчи экономика ӑмӑртӑвӗн пӗтӗмлетӗвӗпе килӗшӳллӗн вӗсенчен кашниех Хисеп грамотипе Тав ҫырӑвне тивӗҫрӗ.

– Тавах ӗҫченсене. Кӑтартусем те, экономика ӳсӗмӗ те тӑрӑшулӑхсӑр пулмаҫҫӗ, – терӗ кӗске каласӑва пӗтӗмлетсе хуҫалӑх ертӳҫи Владимир Славич.



**А. БЕЛОВ**
**сӑн ӳкерчӗкӗ.**

### Ял хуҫалӑхӗнче тата продукци тирпейлекен промышленноҫра ӗҫлекенсен кунне халалласа ирттернӗ савӑнӑҫлӑ пухура чыс-хисепе тивӗҫнисем

**ЧР Ял хуҫалӑх министерствин Хисеп грамотине**

1. **Геннадий Феликсович ШАРАПОВ**, «Путь Ильича» агрофирмӑн тӗп инженерӗ.
2. **Валерий Семенович КОНДРАТЬЕВ**, «ВаСем» чикӗллӗ яваплӑхлӑ общество директорӗн ҫумӗ.
3. **Олег Михайлович НИКИТИН**, «Путь Ильича» агрофирмӑн тракторист-машинисчӗ.
4. **Юрий Анатольевич ПЕТРОВСКИЙ**, «Свобода» ял хуҫалӑх производство кооперативӗ-ӑратлӑх завочӗн Кашмашри сӗт фермин ертӳҫи.
5. **Ирина Николаевна ЯКОВЛЕВА**, ЧР Патшалӑх ветеринари службин «Муркаш районӗнчи выльӑх чирӗсемпе кӗрешекен станцин» выльӑх тухтӑрӗ.

**Район администрацийӗн Хисеп грамотине**

1. **Ирина Валентиновна ПАВЛОВА**, «Россельхозбанк» уҫӑ акционерлӑ обществӑн Чӑваш регионӗнчи филиалӗн Муркашри хушма офисӗн управляющийӗ.
2. **Виталий Алексеевич ЗАМЯТИН**, «Свобода» ял хуҫалӑх производство кооперативӗ-ӑратлӑх завочӗн строителӗ.
3. **Виталий Порфирьевич ЦВЕТКОВ**, Чапаев яч. хис. ял хуҫалӑх производство кооперативӗн механизаторӗ.

**«Единая Россия» политика партийӗн Тав ҫырӑвне**

1. **Фаина Юрьевна АНТОНОВА**, Суворов яч. хис. ял хуҫалӑх производство кооперативӗн ӗнесене машинӑпа сӑвакан операторӗ.
2. **Эльвира Фадеевна ЗАМЯТИНА**, «Свобода» ял хуҫалӑх производство кооперативӗ-ӑратлӑх завочӗн тӗп зоотехникӗ.
3. **Татьяна Александровна АЛЕКСЕЕВА**, район администрацийӗн экономика тата АПК аталанӑвӗ пайӗн тӗп эксперт специалисчӗ.
4. **Павел Геннадьевич ЕФИМОВ**, Чкалов яч. хис. ял хуҫалӑх производство кооперативӗн председателӗ.

**ЧР Патшалӑх Канашӗн Хисеп грамотине**

1. **Юрий Иосифович СКВОРЦОВ**, Чапаев яч. хис. ял хуҫалӑх производство кооперативӗн механизаторӗ.
2. **Татьяна Ильинична ЛЬВОВА**, ЧР Патшалӑх ветеринари службин «Муркаш районӗнчи выльӑх чирӗсемпе кӗрешекен станцин» Шурчари ветеринари участокӗн ертӳҫи.

**Савӑнӑҫлӑ пухуран хатӗрленӗ материалсемпе 3-мӗш стр. паллашӑр.**

Раҫҫейре

## РФ Регионсен аталанӑвӗн министерстви пулӑшӗ

***Ноябрӗн 19-мӗшӗнче Мускаврa Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев Раҫҫей регионсен аталанӑвӗн министрӗпе Игорь Слюняевпа тӗл пулнӑ. Тӗл пулура республика территорийӗнче федераллӑ программӑсене пурнӑҫа кӗртессин, пурӑнмалли ҫурт-йӗр тума пулӑшассин, кунпа пӗрлех Шупашкар 550 ҫул тата Чӑваш автономийӗ 100 ҫул тултарнине хатӗрленсе ирттерессин ыйтӑвӗсене сӳтсе явнӑ.***

Михаил Игнатьев федераци министрне ҫавӑн пирки пӗлтернӗ. Чӑваш Енре эконом класлӑ ҫурт-йӗр ҫӗклессипе чылай нормативлӑ актсем хатӗрлесе йышӑннӑ. Республикӑн патшалӑх тата муниципалитетсен харпӑрлӑхӗнчи ҫӗр резервне хатӗрлеҫҫӗ. Ҫак лаптӑксене инженери инфратытӑмӗпе тивӗҫтерме палӑртнӑ, вӗсене пӗчӗк бюджетлӑ ҫурт-йӗре комплекслӑ майпа тӑвакансене парасшӑн. Ҫак мерӑсем ҫурт-йӗрӗн тӑваткал метрӗн хакне палӑрмаллах чакарма май парӗҫ.

Игорь Слюняев Чӑваш Енӗн ҫурт-йӗр строительствинчи ҫитӗнӗвӗсене палӑртнӑ май республика пӗчӗк бюджетлӑ тата сахал хутлӑ ҫурт-йӗр тӑвакан «пилот» регионӗсен шутне кӗресси ҫинчен каланӑ. Республика Федерацин территорисене планламалли паха тытӑм йӗркеленӗ, кашни хула тата ял тӑрӑхӗн ҫирӗплетнӗ аталану генпланӗ пур субъекчӗсен пысӑк мар йышне кӗнине палӑртнӑ.

Министр Чӑваш Енре нумай ачаллӑ ҫемьесене ҫӗр лаптӑкӗсемпе, тӑлӑх ачасене тата Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ ветеранӗсене ҫурт-йӗрпе тивӗҫтерес енӗпе пурнӑҫланӑ ӗҫе пысӑка хурса хакланӑ, хӑй енчен пулӑшма шантарнӑ.

Республикӑн тата муниципалитетсен ЖКХ сферинчи ӑнӑҫлӑ ӗҫне те ырланӑ. Министр ҫурт-йӗре хутса ӑшӑтмалли тапхӑра лайӑх пуҫланӑшӑн тав тунӑ, Чӑваш Ен тӗлӗшпе ыйтусем ҫукки ҫинчен каланӑ. Ытти чылай регион тӗлӗшпе вара вӗсем пур. Ҫавӑн пекех республикӑра коммуналлӑ пулӑшу ӗҫӗсен тарифӗсен чи пысӑк чикки урлӑ каҫманнине, ҫав вӑхӑтрах граждансен тӗрлӗ категорийӗ валли ҫирӗплетнӗ субсидисене тӳлессипе ҫыхӑннӑ обязательствӑсене вӑхӑтра пурнӑҫланине палӑртнӑ.

**Хамӑр инф.**

Черетлӗ информаци кунӗ

## 9 ял тӑрӑхӗнче пулӗҫ

Паян районта черетлӗ информаци кунӗ иртет. Района килекен ушкӑнсен представителӗсем район администрацийӗн ответлӑ ӗҫченӗсемпе тата федераллӑ структурӑсен представителӗсемпе Муркаш, Мӑн Сӗнтӗр, Оринин, Ҫатракасси, Шетмӗпуҫ, Хорнуй, Чуманкасси, Турай, Ярославка ял тӑрӑхӗсене ҫитме, ӗҫ коллективӗсемпе тӗл пулма, ҫынсене интереслентерекен ыйтусем ҫине хуравлама палӑртаҫҫӗ.

Информаци кунӗн теми – Чӑваш Республикин экономикӑпа социаллӑ пурнӑҫ аталанӑвӗн каҫалхи 9 уйӑх итогӗсем ҫинчен, республикӑн 2012 ҫулхи бюджет политики ҫинчен, Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ 2012 ҫулхи ноябрӗн 2-мӗшӗнче йышӑннӑ 124 № «Чӑваш Республикинче ялсенче пурӑнакансене медицинӑпа санитари пулӑшӑвӗ парассине ҫӗнетсе лайӑхлатассин хушма мерисем ҫинчен» Указӗ, Чӑваш Республикинче пирус туртнине чакарас тӗллевпе туса ирттермелли ӗҫсем ҫинчен.

Саламлатпӑр



Пирӗн хаклӑран та хаклӑ юратнӑ ҫыннӑмӑра – Ҫӗньял Хуракасси ялӗнче пурӑнакан **Альбина Викторовна ВАСИЛЬЕВӐНА** 50 ҫул тултарнӑ ятпа пур кӑмӑлтан ӑшшӑн саламлатпӑр. Юбилей ячӗпе сана чӑваш юманӗ пек ҫирӗп сывлӑх, чӑваш сурпанӗ пек вӑрӑм ӗмӗр сунатпӑр. Эпир сана юратпӑр, чун-чӗререн хисеплетпӗр, эс пуришӗн чунтан савӑнатпӑр, умри ҫулу санӑн яланах анлӑ та ҫутӑ, такӑр пултӑр.

**Пысӑк салампа: амӑшӗ, мӑшӑрӗ, ывӑлӗсем, шӑллӗсем мӑшӑрӗсемпе.**

Савнӑ мӑшӑра, юратнӑ аннене, хаклӑран та хаклӑ хунямана, ырӑ кӑмӑллӑ асаннене, хисеплӗ тӑхлачӑна – Чамӑш ялӗнче пурӑнакан **Светлана Михайловна УТКИНӐНА** 60 ҫулхи юбилей ячӗпе чун-чӗререн саламлатпӑр. Кил ӑшшине тытса пынишӗн, ачусене тӗрӗс-тӗкел ситӗнтерсе ура ҫине тӑма пулӑшнишӗн, кирлӗ вӑхӑтра пулӑшнишӗн, мӑнукусемпе йӑпаннишӗн, тӑванусемпе килӗштерсе пурӑннишӗн сана тав сӑмахӗ калатпӑр, ырлӑх-сывлӑх, телей сунатпӑр, ҫӗре ҫити пуҫ таятпӑр.



Анса пытӑр санӑн пурнӑҫу,
Сывлӑху ан хавшатӑр нихҫан.
Вӑрӑм пултӑр сан ӗмӗрӳ,
Яланах лӑпкӑ пултӑр чӗрӳ.

**Мӑшӑрӗ, хӗрӗпе ывӑлӗ, кинӗпе кӗрӳшӗ, мӑнукӗсем, тӑванӗсем.**

Райадминистрацире

## Тӳрӗ кӑмӑлпа вӑй хунӑшӑн

Район администрацийӗн 2012 ҫулхи ноябрӗн 15-мӗшӗнчи 993 № йышӑнӑвӗпе Уйкас Янасал ял тӑрӑхӗн администрацийӗн эксперт специалистне **Аполлинария Ивановна БУЛАВКИНӐНА** вырӑнти влаҫ органӗсенче нумай ҫул тӳрӗ кӑмӑлпа вӑй хунӑшӑн тата обществӑлла ӗҫе хастар хутшӑннӑшӑн район администрацийӗн Хисеп грамотипе наградӑланӑ.

Ҫырӑнтару – 2013

**Районти «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата 2013 ҫулхи январьтен илсе тӑма малалла ҫырӑнтараҫҫӗ.**

**Эпир вулакансене пӗлтерӗччӗ, июль уйӑхӗнчен шӑмат кунсенчи кӑларӑм 8 страницӑпа тухма пуҫларӗ.**

Республикӑра

## Купӑста фестивалӗ – пысӑк уяв

«Россельхозбанк» уҫӑ акционер обществин Чӑваш регион филиалӗн представителӗсем 2012 ҫулхи ноябрӗн 12-мӗшӗнче Куславкка районӗнчи Кӗнер ялӗнче ирттернӗ регионти «Купӑста фестивальне» хутшӑннӑ. Асӑннӑ мероприяти пуҫаруҫи, хавхалантарса пыраканӗ банкӑн тахҫанхи клиенчӗ – хресчен (фермер) хуҫалӑх ертӳҫи Василий Семенов пулса тӑрать. Ку мероприятие республикӑра 2008 ҫултанпа ирттереҫҫӗ. Фестиваль девизӗ: «Хамӑрӑнне туян, Раҫҫее аталантар!» Унӑн тӗп тӗллевӗсенчен пӗри вара – халӑхӑн йӑли-йӗркисене хисеплесси, вырӑнсенче ял хуҫалӑх продукцийӗ туса илекенсене май пур таран пулӑшасси.

«Россельхозбанкӑн» Чӑваш регионӗнчи филиалӗн директорӗ Ирина Письменская палӑртнӑ тӑрӑх шӑпах та Василий Семенов пек фермерсем пысӑк бизнес ҫук районсенче те кредитсемпе тата патшалӑх пулӑшӑвӗпе усӑ курса ял хуҫалӑх производствине ӑнӑҫлӑ аталантарма май пуррине ҫирӗплетсе параҫҫӗ.

Фестивале хутшӑнма кӑмӑл тунисем хушшинче республикӑри районсен представителӗсем кӑна мар. Хӑнасем Мускавран та, Хусантан та, Ҫармӑс Республикинчен те, чикӗ леш енчи ҫывӑх ҫӗр-шывсенчен те пулнӑ. Фестиваль чӑннипех те пӗтӗм Раҫҫей шайне ҫитсе пырать.

«Купӑста фестивалӗнче» чӑваш ташшин «Савӑнса ташлар!» тепӗр ума конкурсӗ те иртнӗ. Унта вара «Расна» халӑх эстрада ансамблӗн ташлакансен ушкӑнӗ те хутшӑннӑ. Куракансемпе жюри членӗсене «Шур акӑшсем» тата «Савӑнӑҫ ташши» ташӑсем уйрӑмах кӑмӑла кайнӑ. Ташӑ ушкӑнӗ «Халӑх сценин ташши» номинацире 1-мӗш степень лауреачӗн ятне тивӗҫме пултарнӑ.

**О. ГРИГОРЬЕВА,**
**ачасен Муркашри искусство шкулӗн директорӗ.**

Ноябрĕн 21-мĕшĕ – Раççей Федерацийĕн налук органĕсен ĕçченĕн кунĕ

# Пысăк кăтартусемпе кĕтсе илеççĕ



Налук органĕнче вăй хуракансем хăйсен професси уявне ĕçри çитĕнӳсемпе кĕтсе илеççĕ. Кăçалхи 9 уйăхра кăна пур шайри бюджетсене Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕпе 409960 пин тенкĕ налук пуçтарнă. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан ку вăл 112 процент пулать.

Пирĕн районпа налуксене 161996 пин тенкĕ е унчченхи çулхинчен 32 процент нумайрах пухнă. Федераллă бюджета 9598 пин тенкĕ (163 процент), республика бюджетне 62418 пин тенкĕ (117 процент) хывнă.

Налуксен ытларах пайĕ (52,6 процент) уйрăм çынсен тупăшĕнчен илнипе пухăнать – 85204 пин тенкĕ е 129 процент. Организацисен тупăшĕнчен илнĕ налук 27990 пин тенкĕ (151 процент), предприятисен пурлăхĕнчен илекен налук 11376 пин тенкĕ (76 процент), хушма тупăшран илекен налук 9164 пин тенкĕ (164 процент) тата ытти те.

Кăтартусем çултан-çул ӳссе пынинче Налук инспекцийĕн Муркашри уйрăмĕнче вăй хуракансен – **эсир сăн ӳкерчĕкре куракан камераллă тĕрĕслевсен пайĕн тĕп патшалăх налук инспекторĕн Вера Павловăн, вырăнсене тухса тĕрĕслевсем ирттерекен пайăн тĕп патшалăх налук инспекторĕсен Ирина Кирилловăпа Лилия Павловăн тӳпи те çук мар.**

Уяв ячĕпе саламланă май вĕсене хăйсен чыслă ĕçĕнче малашне те ăнăçу, ырлăх-сывлăх сунатпăр.

**И. ШОРОНОВА,**
**аналитика пайĕн пуçлăхĕ.**

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

**НАЛУК СЛУЖБИН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире професси уявĕ – Раççей Федерацийĕн налук органĕсен ĕçченĕн кунĕ – ячĕпе саламлатăп.

Налук службин сотрудникĕсен ĕçĕ-хĕлĕ Чăваш Ен влаç органĕсене республикăн финанс ăнăçлăхне, экономика аталанăвне тивĕçтерес тата унта пурăнакан çынсен пурнăç шайне лайăхлатас тĕллевсене ăнăçлăн пурнăçлама палăрмаллах пулăшать.

Налукçăсен ĕçĕн чи пĕлтерĕшлĕ кăтартăвĕсенчен пĕри бюджет тупăшĕсем ӳсни пулса тăрать. Палăртма кăмăллă, кăçалхи 10 уйăхра республика бюджечĕн налук тупăшĕсен калăпăшĕ, 2011 çулхи çак вăхăтри шайпа танлаштарсан, 15,7 процент чухлĕ ӳснĕ тата 14961,7 миллион тенкĕпе танлашнă. Республика бюджетне налукран кĕрекен укçа-тенкĕ шайĕ ӳсни социаллă тĕллевлĕ тӳлевсем валли, уйрăммăн илес пулсан, бюджет сферинче ĕçлекенсен ĕç укçине ӳстерме, пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх пулăшăвĕшĕн тӳленĕ чухне çăмăллăхсемпе усă куракан граждансен ушкăнĕсене субсидисем тӳлеме тата ытти тĕллевсем валли ытларах укçа-тенкĕ уйăрма май парать.

Çакна та палăртса хăвармалла, юлашки çулсенче налук тӳлекенсен тата ĕç тăвакан влаç органĕсен килĕшӳллĕ ĕçне пула республикăра налук енĕпе ăнăçлă лару-тăру йĕркеленнĕ, тӳрĕ кăмăллă тата патшалăх умĕнчи граждан тивĕçне яваплăха туйса пурнăçлакан налук тӳлекенсен йышĕ пысăкланать. Эпир налук культурин шайĕ ӳссе пытăр тесе тăрăшатпăр, çак ĕçре, паллах, Чăваш Ен налукçисен тӳпи те çук мар.

Налук органĕсен ĕçченĕсене служба ĕçĕсене чыслăн пурнăçланăшăн тата тивĕçе паràннăшăн тав тăватăп, пĕтĕм чунтан çирĕп сывлăх, ăнăçу, ырлăхпа телей сунатăп.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ**
**М. ИГНАТЬЕВ.**

# Турайри чиркӳ ĕçлеме пуçлать

18 ĕмĕрти 60-мĕш çулсенче Турайри йывăç чиркӳ çунса кайнă хыççăн кунта 1792 çулта икĕ престоллă (Иисус Христос Турă çуралнă ячĕпе тата Дмитрий Солунский çветтуй ячĕпе) чиркӳ туса лартнă. Престол уявĕсене январĕн 7-мĕшĕнче тата ноябрĕн 8-мĕшĕнче паллă тунă. Чиркĕве çӳрекен çынсем пулăшнипе хăпартнă ăна. Совет влаçĕ тапхăрĕнче, 1934 çулта, чиркĕве хупнă.

Çитес тунти кун вара, ноябрĕн 26-мĕшĕнче, ирхи 8 сехетре Турай ялĕнчи чиркĕве кĕлĕ туса тасатаççĕ. Малтанхи каç, вырсарни кун, 16 сехетре кунта каçхи кĕлĕ иртет. Чиркĕве пыма кăмăл пуррисемшĕн пуриншĕн те алăк уçă.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Паян – Раççей бухгалтерĕн кунĕ

# Бухгалтер – иккĕмĕш ертӳçĕ



***Çак сăмахсене ахальтен каламаççĕ. Вĕсем кăтартса параççĕ те ĕнтĕ хальхи вăхăтра бухгалтер хăйĕн тивĕçне палăртнă пек пурнăçлани епле пысăк пĕлтерĕшлĕ те ответлă пулнине.***

***Сăн ӳкерчĕкре эсир район администрацийĕн вĕрентӳпе çамрăксен политикин пайĕн тĕп бухгалтерне Галина Степановăна тата тĕп экономистне Надежда Котельниковăна куратăр. Вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ тĕрлĕ цифрăсемпе çыхăннă. Анчах вĕсенче мĕн чухлĕ информаци упраннине вĕсем хăйсем те туллин калама пултараймаççĕ пулĕ.***

***Уяв ячĕпе сире, шут-хисеп ĕçченĕсем!***

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Страховани взносĕсене тӳлемелле

Пенси фондĕнчен хыпарлаççĕ

Çулталăк вĕçлениччен предпринимательсен Пенси фондне страховани взносĕсене тӳлесе татмалла. Паянхи куна районĕпе хăйсем тĕллĕн ĕçлекенсенчен 50 проценчĕ 2012 çулшăн взноссене пĕтĕмпех е вĕсен пĕр пайне тӳленĕ. Пĕтĕмĕшле сумма 6 миллион ытла тенкĕпе танлашать. Республикипе хăйсем тĕллĕн ĕçлекенсен 58 проценчĕ взноссене 200 миллион ытла тенкĕлĕх тӳленĕ.

Хăйсем тĕллĕн ĕçлекенсем шутне уйрăм предпринимательсем, хресчен (фермер) хуçалăхĕсен ертӳçисем, адвокатсем тата уйрăм нотариуссем кĕреççĕ. Районĕпе кун пек страхователсем 90 çын. Вĕсем страхланă çулталăкăн хакне кура Пенси фондне тата Обязательнăй медицина страхованийĕн федераллă фондне страховани взносĕсем тӳлеме тивĕç.

Страхланă çулталăк хакне финанс çулталăкĕн пуçламăшĕ тĕлне палăртнă пурăнма кирлĕ ĕç минимумĕн виçине патшалăхăн бюджет фондне кĕмен страховани взносĕсен тарифĕ тата çулталăкри календарлă 12 уйăх çине хутласа палăртаççĕ.

2012 çулта страховани взносĕсем тӳлеме чи пĕчĕк ĕç укçин виçи уйăхне 4611 тенкĕпе танлашать. Пенси фончĕн страховани взносĕсем 26 процентпа танлашаççĕ (20 процент пенсин страхланă пайĕ тата 6 процент пенсин пухăнакан пайĕ). Обязательнăй медицина страхованийĕн федераллă фондне 5,1 процент тӳлемелле.

Апла пулсан 2012 çулта предпринимательсен тата уйрăм ĕçпе çыхăннă ытти граждансен Пенси фондне 14386,32 тенкĕ (4611 тенкĕ х 26 процент х 12 уйăх) тӳлеме тивет. 1966 çулта тата унран маларах çуралнă çынсен пĕтĕм сумма пенсин страхланă пайĕ çине каять, ыттисен вара ку суммăран 11066,40 тенкĕ (20 процент) ĕç пенсийĕн страхланă пайĕ çине, 3319,92 тенкĕ (6 процент) пенсин пухăнакан пайĕ çине куçать.

Обязательнăй медицина страхованийĕн федераллă фондне 2821,93 тенкĕ тӳлемелле (4611 тенкĕ х 5,1 процент х 12 уйăх).

Енчен те гражданин уйрăм предприниматель тесе кăçал регистрациленнĕ пулсан, взноссене унăн регистрациленнĕ календарлă уйăхран тытăнса тӳлемелле пулать. Хăш кун предприниматель ĕçĕпе ĕçлеме тытăннине те шута илеççĕ. Тӳлев суммипирки Пенси фончĕн вырăнти управленийĕнче ыйтса пĕлме пулать.

Тӳлев документчĕсен бланкĕсен формисене тата тӳлев йĕрки пирки информацие РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн сайтĕнче «Работодателям и предпринимателям региона» пайра вырнаçтарнă.

Тӳлевсене парса татмалли чи лайăх мел – Перекет банкĕн банкомачĕсемпе тата тӳлев терминалĕсемпе усă курни. Тӳлевсене çавăн пекех банк çыхăнăвне йĕркелесси пирки килĕшӳ туса Интернет урлă та хывма пулать.

Взноссене декабрĕн 31-мĕшĕччен кая юлмасăр бюджета кĕмен кашни фонда уйрăммăн парса татмалла. Саккунпа килĕшӳллĕн асăннă срок тухнă хыççăн парăмсене ирĕксĕр майпа шыраса илĕç.

**О. АЛЕКСЕЕВА,**
**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пай пуçлăхĕ.**

Ял пурнăçĕ

# Пĕрле пулса кĕпер турăмăр

Ял çыннин тĕрлĕ йывăрлăхпа тĕл пулма тивет. Унта-кунта улича карти тайăлнă та ăна юсамалла, унсăрăн выльăх-чĕрлĕх уйхире тухса каять. Пĕве пуçне те ишĕлме памалла мар, шывĕ тăтăш кирлĕ. Пирĕн ял çырма-çатраллă вырăнта пирки кĕпер ыйтăвĕ тĕп вырăнта тăрать, ун урлă трактор-машина, кĕтӳ те каçса çӳрет. Юлашки вăхăтра вăл япăхсах çитрĕ. Çапла вара эпир Анаткас Апаш ялĕнчен Чуманкассине каçакан чылай çул аран-аран ларакан кĕпере юсама шухăшларăмăр. Паллах, кунта çирĕп стройматериал кирлĕ, унсăрăн ĕç харама кăна каять. Нумай шухăшласа тăмарăмăр, Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертӳçи Павел Геннадьевич Ефимов патне çул тытрăмăр. Вăл вара, ял çыннин нушине аван ăнланаканскер, пире хирĕçлемерĕ, пуçарăва ырларĕ кăна.

– Ĕçлекен, тăрăшакан халăха пулăшмалла, – терĕ вăл пĕр тăхтаса тăмасăр.

Анаткас Апаш ялĕнче пултаруллă та пуçаруллă çынсем пур. Вĕсенчен пĕри – Геннадий Тимофеев. Вăл маларах ял депутачĕнче аван тăрăшнăскер хуçалăх ертӳçи материалпа тивĕçтерме шантарсан тӳрех хăй тракторне тапратса çула тухрĕ. Çавăн пекех кĕпер тума ялти арçынсене пухрĕ. Ку ĕçрен никам та аякра юлмарĕ. Çапла вара халĕ Анаткас Апашсен çĕнĕ кĕпер пур, паллах, ырă çынсем пулăшнипе тата тăрăшнипе.

**Павел Геннадьевич пек çын нушине ăнланакан ертӳçĕсем ытларах пулсан ял пурнăçĕ сӳнмĕ. Ырлăх-сывлăх, çавăн пекех тăван хуçалăха аталантарма вăй-хăват пултăр ялан сирĕн. Ырă туни ыррипех таврăнтăр.**

**Сире тав туса Анаткас Апаш ял çыннисем.**

# Ырă ĕç – çунатлă туссемшĕн

Çут çанталăк тата эпир

Муркашри «Солнышко» ача сачĕн картишĕнче чылай йывăç ӳсет. Çакăнпа усă курса ĕнтĕ кунти 2-мĕш «А» кĕçĕн ушкăнра «Кайăксем валли сырăш ту» ятпа ырă ĕçсен эрнине ирттерме шутларăмăр.

Кĕçех сивĕ хĕл кунĕсем çитеççĕ. Кайăксемшĕн вара хĕлле йывăр вăхăт. Ачасене çакна ăнлантарса ĕçе тытăнтăмăр.

Пластик кĕленчесенчен, курупкасенчен, хăма татăкĕсенчен те – темĕнле хатĕртен те сырăш тума пулать. Ачасемпе пĕрле ашшĕ-амăшĕ те пысăк ăсталăхпа палăрчĕ: халĕ йывăçсем çинче мĕн тĕрлĕ сырăш çук пулĕ. Анчах та кашнинех тĕп условисене пăхăнса тунă: юр çусан унти апата хупласа хумалла мар, сырăша апат тухса ӳкмелле мар ăсталамалла, сырăша йывăç çумне пăтапа çакма юрамасть. Чи пĕлтерĕшлине ачасем лайăх астуса юлчĕç – кайăксене тăтăшах апат парса тăмалла.

Çак ырă ĕçе хутшăннă ашшĕ-амăшĕсене пысăк тав сăмахĕ калатпăр. Ачасемпе пĕрле ĕçлени пурнăçра ырăпах таврăнать.

**Т. НИКОЛАЕВА, воспитатель.**



Культура хыпарĕсем

# «Кун хыççăн кун»

Çак ятпа Ярославка ялĕнчи библиотекăра çĕнĕ хаçат-журналсен выставкине йĕркеленĕ. Ял библиотеки 2013 çулхи пĕрремĕш çур çул валли хаçат-журнал çырăннă ĕнтĕ. Библиотекăна пыракансем районти «Çĕнтерӳ ялавĕ», республикăри «Хыпар», «Советская Чувашия», «Чăваш хĕрарăмĕ», «Пенсионер Чувашии», «Кил-çурт, Хушма хуçалăх», «МК в Чебоксарах», «Школьники» хаçатсемпе паллашма пултараççĕ. «Тетте», «Сельская новь», «Капкăн», «Тăван Атăл», «1000 + 1 мелочь» журналсене те вулама интереслĕ. Хĕрарăмсемшĕн, çамрăк хĕрсемшĕн вара «Вязаный Креатив», «Советчица» журналсенче кирли сахал мар.

**Д. ИВАНОВ.**

**Районти çĕр ĕçченĕсемпе продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен уявĕнчен**

# Тулли кĕлте хирте çыхăнать

Хресчен ĕçĕн тĕллевĕ – çĕр-аннемĕре хуçасăр тата пушă вырттарас марри. Çиччĕ виçсе вăй хурсан вăл ĕçлекен çынна тăрантарать. Тухăç пысăк пулсан çĕр-шыв тĕреклĕрех, экономика пуянрах пулать. Кĕр кунĕсем – çĕр ĕçченĕшĕн çу каçа пурнăçланă ĕçсене пуç тавра çиччĕ çавăрса тĕплĕ пĕтĕмлетӳ тумалли вăхăт. Çакна асра тытса чăваш хресченĕ уй-хир ĕçĕсем вĕçленнĕ май хăйĕн ĕçне хак парса çулленех анлă ларусем ирттерет, пĕрле пулса мĕн туса илнине пăхса-хакласа умри тĕллевсене палăртать.

Иртнĕ эрне кун, чӳк уйăхĕн 16-мĕшĕнче, Муркашри Культура çуртĕнче районти çĕр ĕçченĕсемпе ял хуçалăх продукцине тирпейлекен промышленноçра вăй хуракансен савăнăçлă уяв пухăвĕ иртрĕ.

Муркаш енри çĕр ĕçченĕсемпе продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсене тав туса уяв пухăвне район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев уçрĕ. Вăл уй-хирте ĕçлекенсене, выльăх-чĕрлĕх пăхакансене тата ял хуçалăх продукцине тирпейлессипе тăрăшакансене кăçал пурнăçланă ĕçĕсемшĕн саламларĕ. Çакăнпа пĕрлех тунă ӳсĕмсем çĕнĕ çитĕнӳсене алла илме çул уçнине уйрăм хуçалăхсен тĕслĕхĕсемпе палăртрĕ. Кăçалхи ял хуçалăх ĕçĕсене тишкернĕ май Ростислав Николаевич вăл е ку ĕçре хастарлăхпа уйрăмах палăрнисене ятран асăнчĕ.

– Районти ял хуçалăх ĕçченĕсен тăрăшуллă ĕçĕпе çут çанталăк кăларса тăратнă кăçалхи йывăрлăхсене пĕрле çĕнсе пытăмăр. Сирĕн çак çирĕп тăрăшулăх пĕр ĕмĕтпе ĕçлесен сăрт-ту çинче те тырăпулă ӳстерме май пуррине кăтартать. Малашне те пĕр çăвартан пĕрлехи тĕллевпе ĕçлесе пурăнасчĕ, тăван ен экономикине татах тĕреклетесчĕ, аслă ăрусем умĕнче питĕмĕре хĕретес марччĕ. Çапла тума эпир пултаратпăр. Çакăн пирки иртсе пыракан ял хуçалăх çулĕн ĕç кăтартăвĕсем уççăн калаççĕ. Пирĕн ĕçлеме пултараслăх иксĕлмен-ха, вăй-хăватăмăр та пур, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ.

Ĕçре хастарлăхпа палăрнисене ырлăх-сывлăх сунса район пуçлăхĕ, районти депутатсен Пухăвĕн председателĕ, Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн ертӳçи И. Николаев çакна палăртрĕ:

– Вăл е ку çитменнипе кун кунлама пулать пулсан, çăкăр-тăварсăр пĕр кун та пурăнма çук. Çак чăнлăх çĕр ĕçченĕн пархатарлăхне кăтартать те ĕнтĕ. Çуллахи-хĕллехи ĕçсем ял çынни пурнăçĕнче тачă çыхăнура пыраççĕ. Çулла выльăх апачĕ çителĕклĕ янтăлама пултартăмăр пулсан хĕл кунĕсенче те çĕр ĕçченĕн ĕç продуктивлăхĕ начар пулмĕ. Апла пулсан хуçалăх кассине кĕрекен укçа-тенкĕ калăпăшĕ те малашлăх утăмсемшĕн шанчăк çуратĕ. Ял хуçалăх предприятийĕсен аталанăвĕ пĕччен пурнăçламалли ĕç мар. Акă банксен пулăшăвĕ, страхлакан компанисен тимлĕхĕ – пире малалла утма пулăшакан тĕкĕсем. Вĕсене те пирĕнтен паян тав сăмахĕ çеç. Продукци тирпейлекен промышленность – ялта ĕçлекенсемшĕн укçа-тенкĕ çăл куçĕ. Çапла вара пĕрлĕхре пулсан çеç эпир çĕр-шыв ертӳçисем хамăр ума тăратакан задачăсене пурнăçлама пултаратпăр.

Уявра хăнасем те йышлă пулчĕç. Вĕсен ырă сĕнĕвĕсем Муркашри çĕр ĕçченĕсене район тулашĕнче те шаннине çирĕплетрĕç.

– Кризиссем килеççĕ те иртеççĕ, анчах çĕр ĕçченĕн ыранхи пирки шутлама манмалла мар. Умра пуçăнман ĕçсем те, ырă ĕмĕтсем те пайтах. Вĕсене пурнăçа кĕртесси – пĕрлехи тĕллев. Çак ĕçре эсир Чăваш Еншĕн аталану тĕслĕхĕ пулса тăратăр. Ĕç кăтартăвĕсене курса сирĕн хыççăн ыттисем те шанчăклăрах утĕç, – терĕ Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕн çумĕ Н. Якимов. – Муркашсем мĕн пурнăçланипе лăпланма юраманнине ăнланаççĕ. Ăна тĕпе хурса малашлăх планĕсене палăртасси те – сирĕн ырă йăлара. Эсир çывăх малашлăхрах çĕнĕ технологисене алла илсе çĕр ĕçĕнче татах курăмлăрах ӳсĕмсем тăвасси пирки иккĕленместĕп.

Районти çĕр ĕçченĕсене Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсем Н. Ванеркинпа В. Мидуков та саламларĕç.



**«Герой» хуçалăх (ертӳçи Г. Иванова) çĕнĕ техника туянассипе тăрăшуллă пулнăшăн «Агротехкомплект» чикĕллĕ яваплăхлă обществăран Тав çырăвĕ тата тĕслĕ телевизор илме тивĕç пулчĕ.**



**Чи лайăх комбайнерсем: Б. Никитинпа Р. Кузнецов.**

– Агропромышленность комплексĕн аталанăвне çирĕплетесси – Чăваш Ен пуласлăхĕшĕн малта тăракан задача. Çак отрасль эффективлă пулнипе пирĕн граждансен тăнăç пурнăçĕ тӳрремĕнех çыхăннă. Ял ĕçченĕ çут çанталăк условийĕсемпе питех те йывăр çул чăтса ирттерчĕ. Анчах вĕсем алă усмарĕç. Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин Правительствисен пулăшăвĕпе усă курса вĕсем тухса тăнă йывăрлăхсене çĕнсе аталану çулĕпех малалла пыраççĕ. Çакăншăн Муркаш ен ĕçченĕсене пысăк тав, – терĕ Николай Григорьевич.

Районти çĕр ĕçченĕсене çак пухура кӳршĕллĕ Шупашкар, Етĕрне, Красноармейски, Элĕк районĕсен, Мари Эл Республикин Туçи Çармăç районĕн представителĕсем, РФ Перекет банкĕн, «Россельхозбанкăн», «Россельхозцентрăн», Вăрнарти сĕт завочĕн, «СтройАгрохимия» тата «Агрокомплект» обществăсен ĕçченĕсем те саламларĕç.

Патшалăх пулăшăвĕпе çителĕклĕ усă курса хăйсен тăрăшуллă вăйĕпе районти ял хуçалăх предприятийĕсем япăх мар кăтартусем турĕç. Çакăн пирки уяв кĕрекинче район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ тата АПК аталанăвĕпе экономикăн тата муниципаллă харпăрлăх управленийĕн пуçлăхĕ В. Ананьев анлă доклад туса пачĕ.

Районти ял хуçалăх предприятийĕсем кăçалхи 10 уйăхра 343 миллион тенкĕлĕх (иртнĕ çулхин 105 процентчĕ) продукци туса илме мехел çитернĕ. Уйрăмах кăтартуллă ĕçленисем: «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики, «Свобода», «Ударник», Суворов яч. хис., «Оринино», Ильич яч. хис. хуçалăхсем. Вĕсен продукци туса илеслĕхĕ пĕтĕмĕшле калăпăшăн 85 процентчĕпе танлашать.

Агропромышленность комплексĕн организацийĕсем патшалăх панă çăмăллăхсемпе тĕллевлĕ усă курса кăçал 22 пин тонна тырпул пуçтарса кĕртнĕ. Гектар пуçне тивекен вăтам тухăç 17,1 центнерпа танлашнă. Çак кăтартăва Чкалов яч. хис. хуçалăхра 25,8 центнера, «Восток» кооперативра 23,3 центнера çитерме пултарнă.

Вырма вăхăчĕ йĕпе-сапаллă килсе тухнăран кӳршĕсене пулăшма хевте çитернисене те пухура ырăпа асăнмасăр иртмерĕç. Çак чыса Ильич яч. хис., Чкалов яч. хис. кооперативсемпе А. Пихтеров, А. Трепнев, И. Скворцов хресчен (фермер) хуçалăхĕсем тивĕçрĕç.

Савăнăçлă пухура обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсен тăрăшулăхне палăртмасăр та иртмерĕç. Кăрлач – юпа уйăхĕсенче районти пĕтĕм категориллĕ хуçалăхсенче пĕтĕмпе 4,3 пин тонна ашкакай (пĕлтĕрхин 108,4 процентчĕ), 37,7 пин тонна (107,3 процент) сĕт, 62,9 миллион штук çăмарта туса илнĕ.

– Маттур ĕçлерĕр пулсан сирĕн паян туллин савăнма та ирĕк пур. Савăнăр та кӳршĕсен ĕçĕсемпе ăнăçăвĕсене пăхса çĕнĕ тĕллевсем палăртăр. Эсир кирек епле çанталăк условийĕсенче те тухăç илме пултарнине кăçал аванах куртăмăр. Апла пулсан пирĕн сирĕнпе малашлăх пур. Районшăн çĕр ĕçченĕсемпе продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунне паллă тăвасси пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнăран пурсăра та ун ячĕпе саламлатăп, – терĕ доклада вĕçленĕ май Владислав Кириллович.

Пухура вырмара палăрнă комбайнерсем, ĕçри ырă тĕслĕхлĕ водительсем, уй-хир ĕçĕнчен пăрăнман механизаторсем, мал туртăмлă бригадирсемпе уй-хир ĕçченĕсем те нумайăшĕн район администрацийĕн Хисеп грамотине, дипломĕсене, ЧР Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине, «Вырма-2012» конкурс пĕтĕмлетĕвĕпе свидетельствăсене илме пултарчĕç.

**А. БЕЛОВ.**

**Район администрацийĕн йышăнăвĕ**

## 2012 çулхи вырмара ял хуçалăх предприятийĕсен механизаторĕсем, механизациленĕ тата уй-хир бригадисем хушшинчи экономика ăмăртăвĕн пĕтĕмлетĕвĕсем çинчен

**Производство калăпăшне малашне те ӳстерес тĕллевпе тата ял хуçалăх предприятийĕсен механизаторĕсем хушшинчи конкурса пĕтĕмлетсе район администрацийĕ çапла йышăнать:**

***1. 2012 çулхи вырмара çурла уйăхĕн 2-мĕшĕнчен пуçласа авăн уйăхĕн 7-мĕшĕччен тапхăрта ирттернĕ механизаторсен «Вырма-2012» конкурсне пĕтĕмлетсе çаксене свидетельствăсем тата укçан преми парас:***

– Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕнчи Радонеж Виссарионович Кузнецов комбайнерăн экипажне – 3000 тенкĕ;

– А. Н. Пихтеровăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнчи Александр Васильевич Морозов комбайнерăн экипажне – 2100 тенкĕ;

– Чкалов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕнчи Болеслав Николаевич Никитин комбайнерăн экипажне – 1800 тенкĕ;

– «Восток» ял хуçалăх производство кооперативĕнчи Сергей Валериянович Наумов комбайнерăн экипажне – 1800 тенкĕ;

– «Путь Ильича» агрофирмăри Иван Вадимович Васильев комбайнерăн экипажне – 1000 тенкĕ;

– «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕнчи Евгений Леонидович Ершов комбайнерăн экипажне – 800 тенкĕ;

– «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăри Владимир Владимирович Рыбаков комбайнерăн экипажне – 500 тенкĕ;

– В. В. Бархаткин хресчен (фермер) хуçалăхĕнчи Владислав Валерианович Бархаткин комбайнерăн экипажне – 500 тенкĕ.

***2. 2012 çулхи вырмара ял хуçалăх предприятийĕсен механизаторĕсем, механизациленĕ тата уй-хир бригадисем хушшинчи конкурсра çаксем çĕнтернĕ тесе йышăнас:***

**2.1. Комбайнерсен экипажĕсем хушшинче:**

– Чкалов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕнчи Болеслав Николаевич Никитин комбайнерăн экипажĕ. «Вектор-410» комбайнпа условнăй единицăпа 896,6 тонна тырă çапса илнĕскерне 1-мĕш степеньлĕ дипломпа 3000 тенкĕ укçан преми парас тата «Вырма-2012» тапхăрăн чи лайăх комбайн экипажĕ» чемпион хăйăвĕ çакса ярас;

– Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕнчи Радонеж Виссарионович Кузнецов комбайнерăн экипажĕ. «Акрос-530» комбайнпа условнăй единицăпа 688,3 тонна тырă çапса тĕшĕленĕскерне 2-мĕш степеньлĕ дипломпа 2500 тенкĕ укçан преми парас;

– А. Н. Пихтеровăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнчи Александр Васильевич Морозов комбайнерăн экипажĕ. «Полесье-812» комбайнпа условнăй единицăпа 658,8 тонна тырă çапса тĕшĕленĕскерне 3-мĕш степеньлĕ дипломпа 2000 тенкĕ укçан преми парас.

**2.2. Водительсем хушшинче 9 уйăх пĕтĕмлетĕвĕпе:**

– Андрей Юрьевич Архипова, Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн водительне ГАЗ-53 автомашинăпа 144000 тонна-километр ĕç тунăшăн 1-мĕш степеньлĕ диплом, 1500 тенкĕ укçан преми парас тата «2012 çулхи районти чи лайăх водитель» хăю çакса ярас;

– Николай Георгиевич Селюшкина, «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă общество водительне ГАЗ-53 автомашинăпа 90000 тонна-километр ĕç тунăшăн 2-мĕш степеньлĕ диплом тата 1000 тенкĕ укçан преми парас;

– Иван Валерьевич Степанова, «Ударник» хуçалăхăн водительне ГАЗ-53 автомашинăпа 36920 тонна-километр ĕç тунăшăн 3-мĕш степеньлĕ диплом тата 800 тенкĕ укçан преми парас.

**2.3 Трактористсем хушшинче 9 уйăх пĕтĕмлетĕвĕпе:**

– Николай Иванович Петрова, «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă общество трактористне МТЗ-1221 тракторпа 2010 условнăй эталон-гектар ĕç тунăшăн 1-мĕш степеньлĕ диплом, 1500 тенкĕ укçан преми парас тата «2012 çулхи районти чи лайăх тракторист» хăю çакса ярас;

– Леонид Федорович Макарова, Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн трактористне ХТЗ-17221 тракторпа 1809,6 условнăй эталон-гектар ĕç тунăшăн 2-мĕш степеньлĕ диплом тата 1000 тенкĕ укçан преми парас;

– Александр Юрьевич Архипова, Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн трактористне МТЗ-82 тракторпа 1750 условнăй эталон-гектар ĕç тунăшăн 3-мĕш степеньлĕ диплом тата 800 тенкĕ укçан преми парас.

**2.4 Уй-хир бригадисем хушшинче:**

– Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн Михаил Гельмасович Иванов ертсе пыракан уй-хир бригадине 1-мĕш степеньлĕ диплом тата 2000 тенкĕ укçан преми парас;

– Чкалов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн Алевтина Витальевна Никитина ертсе пыракан уй-хир бригадине 2-мĕш степеньлĕ диплом тата 1500 тенкĕ укçан преми парас;

– «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕ-ăратлăх завочĕн Кронид Германович Яриков ертсе пыракан уй-хир бригадине 3-мĕш степеньлĕ диплом тата 1000 тенкĕ укçан преми парас.

**2.5. Механизациленĕ бригадăсем хушшинче:**

– «Путь Ильича» агрофирмăри Геннадий Феликсович Шарапов ертсе пыракан механизациленĕ бригадăна 1-мĕш степеньлĕ диплом тата 2000 тенкĕ укçан преми парас;

– Е. Андреев яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн-ăратлăх завочĕн Алексей Мефодьевич Скворцов ертсе пыракан механизациленĕ бригадăна 2-мĕш степеньлĕ диплом тата 1500 тенкĕ укçан преми парас;

– Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн Геннадий Аверкиевич Викторов ертсе пыракан механизациленĕ бригадăна 3-мĕш степеньлĕ диплом тата 1000 тенкĕ укçан преми парас.

# Ответлăх туйăмĕ çителĕксĕр

## Çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăх

Руль умне ӳсĕрле ларнă водительсене пула çул-йĕр çинче сахал мар инкек пулса тухать. Вĕсене асăрхаттарас тĕллевпе пакунлисем чылай ĕç пурнăçлаççĕ. Акă ноябрĕн 15–18-мĕшĕсенче «Урă мар водитель» ятарлă рейда çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн районти пиллĕк инспекторĕ кăна мар, пур участковăй та, патрульпе пост службин сотрудникĕсем те хутшăнчĕç. Ĕçре пулăшу кӳрес тĕллевпе полицейскисемпе пĕрле халăх дружинникĕсем тата çак йĕркесене çыракан та çула тухрăмăр.

Çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекторĕсем – çĕрле-и, ирпе-и, кăнтăрлаи – пур чухне те водительсене яланах çирĕп контрольлеме тăрăшаççĕ. Асăннă кунсенче вара ушкăнсем каç кӳлĕм вăхăтне суйласа кашни ял тăрăхнех çитрĕç. Машинăсене чарса водительсене тĕрĕслесси нумай вăхăт йышăнмасть, çавăнпах водительсене нимĕнле чăрмав та кӳмест темелле. Çак ĕçе туса ирттерни вара чăнах та çул-йĕр инкекĕсем пуласлăхсинчен сыхлать.

Акă каçалапа Турай ял тăрăхĕнчи Çаранçырми ялĕ çывăхĕнче сотрудниксем пĕр машинăна чарчĕç. Водитель сотрудниксем тĕрĕслев ирттерме ыйтнине хирĕçлемерĕ. Хăй вара эрех ĕçнĕ пулнă.

Васкассинчи информаципе культура центрĕ умĕнче шăмат кунхи ташă каçĕ пыратчĕ. Машинăсемпе килнисем сахал марччĕ – пĕр теçеткене майлă çăмăл машина ларатчĕ. Каярах вара çак яла илсе çитерекен çулсем çинче тĕрĕслев ушкăнĕ машинăсене чарса водительсене тĕрĕслерĕ. Акă Юрпаша пăрăнмалли çул çинче те харăсах темиçе машина пулчĕ. Ку хутĕнче водительсем урах.

Профилактика мероприятийĕ вăхăтĕнче вара РФ Администрацивлă право нарушенийĕсем пăснин кодексĕн 12.26 (медицина тишкерĕвне тума килĕшменни) тата 12.8 (ӳсĕрле руль умне ларса çула тухни) статйисемпе килĕшӳллĕн пурĕ 7 водителе администрацивлă явап тыттарнă.

Кĕркуннехи-хĕллехи тапхăрта çул-йĕр çинчи инкексем ачасем хутшăннипе те сахал мар пулса иртнине асăнмасăр хăварма çук. Кăçалхи вицĕ квартала кăна çул-йĕр çинчи инкексенче республикăра пурĕ 216 ача суранланнă, 8 вилнĕ. Пирĕн районта пулса иртнĕ икĕ тĕслĕхре 2 ача суранланнă.

Çакăн пек инкексене асăрхаттарас тĕллевпе ноябрь пуçламăшĕнче районта «Тимлĕ пулăр – каникул!» профилактика мероприятийĕ иртрĕ. Патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн районти тĕп инспекторĕ С. Иванов каланă тăрăх мероприятие хутшăннă сотрудниксем ашшĕ-амăшĕсемпе ачасен хăрушсăрлăхĕ пирки калаçусем ирттернĕ. Транспорта ачасене илсе çӳрессипе çыхăннă йĕркене тепĕр хут аса илтернĕ.

Ноябрĕн 15-мĕшĕнче иртнĕ «Ачасем» рейд та усăллă пулчĕ. Ун вăхăтĕнче руль умне ларнă 18 çул тултарман çамрăксене тытса чарнă. Вĕсен йĕркене пăхăнманнишĕн халĕ ашшĕ-амăшĕсен те явап тытмалла пулать. Протоколсене администрацивлă комиссие çитернĕ ĕнтĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Чувашская Республика
Администрация Моргаушского района
ПОСТАНОВЛЕНИЕ
16.11.2012 г. № 1001
с.Моргауши

**Об утверждении перечня земельных участков, подлежащих предоставлению многодетным семьям на территории Моргаушского района**

В соответствии с законом Чувашской Республики №10 от 01.04.2011г. «О предоставлении земельных участков многодетным семьям в Чувашской Республике», постановлением администрации Моргаушского района №353 от 18.04.2011г. «О порядке предоставления многодетным семьям в собственность бесплатно земельных участков, находящихся в муниципальной собственности», администрация района **п о с т а н о в л я е т**:

Утвердить перечень земельных участков, находящихся в собственности Моргаушского района, предназначенных для предоставления многодетным семьям в собственность бесплатно (прилагается).

**Глава администрации района Р.Н. ТИМОФЕЕВ.**

**Приложение к постановлению администрации Моргаушского района от 16.11.2012г. N 1001**

**ПЕРЕЧЕНЬ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ, ПОДЛЕЖАЩИХ ПРЕДОСТАВЛЕНИЮ МНОГОДЕТНЫМ СЕМЬЯМ НА ТЕРРИТОРИИ МОРГАУШСКОГО РАЙОНА**

| N п/п | Местоположение, адрес | Кадастровый N земельного участка | Площадь земельного участка, га | Вид разрешенного использования земельного участка |
|---|---|---|---|---|
| 1. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д.Костеряки | 21:17:180102:142 | 0,1265 | для индивидуального жилищного строительства |
| 2. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д.Костеряки | 21:17:180102:143 | 0,1265 | для индивидуального жилищного строительства |
| 3. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д.Костеряки | 21:17:180102:144 | 0,15 | для индивидуального жилищного строительства |
| 4. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д.Костеряки | 21:17:180102:145 | 0,1399 | для индивидуального жилищного строительства |
| 5. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д.Костеряки | 21:17:180102:146 | 0,15 | для индивидуального жилищного строительства |
| 6. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д.Костеряки | 21:17:180102:147 | 0,15 | для индивидуального жилищного строительства |
| 7. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д.Костеряки | 21:17:180102:148 | 0,15 | для индивидуального жилищного строительства |
| 8. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д.Костеряки | 21:17:180102:149 | 0,15 | для индивидуального жилищного строительства |
| 9. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д.Костеряки | 21:17:180102:150 | 0,15 | для индивидуального жилищного строительства |
| 10. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д.Костеряки | 21:17:180102:151 | 0,15 | для индивидуального жилищного строительства |

## Спорт

# «Стартра – çамрăксем!»

**Çак ятпа эрне кун, ноябрĕн 23-мĕшĕнче, районта вунăмĕш хут ĕçлекен çамрăксен спартакиади иртет.** Ăмăртăва хутшăнакан командăсене «Сывлăх» ФСК-ра çав кун 9 сехетрен пуçласа регистрациленĕç. Командăсенче 18–35 çулхи çамрăксем пулмалла. Вĕсен хăйпе пĕрле ĕç кĕнекисен çирĕплетнĕ копине илмелле. Ял тăрăхĕн командинчен пулсан – çав вырăнта пурăннине çирĕплетекен паспортри страница копийĕ кирлĕ.

Ăмăртăва 7 енĕпе ирттерме палăртнă: ишесси, сĕтел çи теннисĕ, дартс, алăпа туртăнасси (арçын), кĕлеткене çĕклесси (хĕрарăм), волейбол вăййи, канат туртасси. Ăмăрту 10 сехетре пуçланать.

# Ăмăрту – сĕтел çи теннисĕпе

**Çитес шăмат кун, ноябрĕн 24-мĕшĕнче, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче сĕтел çи теннис енĕпе ăмăрту иртет.**

Ку ăмăртăва хутшăнакан командăсенче 3-шер çын – ял тăрăхĕн пуçлăхĕ, ял тăрăхĕнчи муниципаллă служащи тата ял тăрăхĕнчи депутат пулмалла. Мала тухнă командăсене дипломсемпе парнесем кĕтеççĕ, çĕнтерӳçĕ команда кубока та тивĕçет.

Лайăх выляканисене маларах асăннă ушкăнсенче уйрăммăн палăртаççĕ. Вĕсене – призлă вырăнсем йышăннисене – дипломсем тата медальсем парса чысласçĕ.

Ăмăрту 10 сехетре пуçланать.


**23 и 24 ноября с 9-00 ч. Медицинский центр г. Чебоксары проводит медицинский осмотр состояния здоровья человека при помощи передовой компьютерной экспресс-диагностики в Моргаушском ФСК «Сывлăх», запись по тел.: 62-2-85. С вами работает высококвалифицированный врач Самакова Надежда Ивановна. Тел.: 8-906-385-28-09. Оплата 450 руб.** Лицензия Д 231533 Рег. № 74 от 06.06.2003 г. 8-906-385-83-77.

**ООО «Виктория»**

* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков: оформление в собственность, в аренду, регистрация.
* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.
* Составление договоров, исковых заявлений, жалоб, писем.
* Представительство в судах всех инстанций.
* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП.
* Ведение бухгалтерского учета, составление деклараций, передача их по Интернету.
* Кадровое делопроизводство.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел. : 44-64-48, факс: 8 (8352) 22-10-60.
E-mail: vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru
Доп. офис: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119. Тел.: 62-4-43.

**22 ноября в РДК с 9-00 часов грандиозная распродажа «Чебоксарского трикотажа». Скидки до 40 %.**

**Осенняя распродажа: мотоблоки, мини-тракторы, навесное оборудование, снегоуборочная техника, запчасти, ремонт. Тел.: 8-967-470-31-43.** 6-12.

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а. Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64.** 3-10.



**23 ноября в РДК с 8.00 час. до 16.00 час. состоится выставка-продажа обуви Ульяновской, Белорусской и др. российских обувных фабрик из натуральной кожи, а также выставка-продажа трикотажных изделий.** 2-5.

**Продам шерсть осеннюю битую оптом. Тел.: 8-917-908-65-75.** 1-3.

* * *

**Продается ВАЗ 2107-4, в отличном состоянии, инжектор, октябрь 2007 года выпуска, пробег 30400 км, 2 хозяина, сигнализация, магнитола. Тел.: 8-965-683-09-77.**

* * *


**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:281001:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Васильев Павел Алексеевич, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, ул. Магницкого, д. 1, кв. 53.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:281001:2. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

## Прогноз погоды

| | среда 21 ноября | | | | четверг 22 ноября | | | | пятница 23 ноября | | | | суббота 24 ноября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | 0 | 0 | -1 | 0 | 0 | 0 | -1 | -1 | -1 | -1 | -1 | -1 | -1 | -1 | -2 | -1 |
| Давление мм | 757 | 758 | 759 | 760 | 761 | 761 | 761 | 760 | 759 | 759 | 758 | 758 | 757 | 760 | 760 | 760 |
| Влажность % | 88 | 87 | 85 | 87 | 91 | 94 | 89 | 88 | 81 | 86 | 87 | 83 | 83 | 83 | 85 | 85 |
| Ветер м/сек | 5 | 5 | 4 | 4 | 3 | 3 | 5 | 5 | 5 | 5 | 5 | 5 | 4 | 1 | 1 | 2 |
| | З | З | З | С-З | З | З | Ю-З | З | З | З | З | З | З | З | З | З |
| Солнце восход / заход | | 08:42 | 16:35 | | | 08:44 | 16:33 | | | 08:46 | 16:32 | | | 08:48 | 16:31 | |
| Луна восход / заход | | 13:47 | 00:23 | | | 14:04 | 01:38 | | | 14:20 | 02:52 | | | 14:38 | 04:03 | |


**Спутниковое цифровое телевидение высокой четкости FULL и HD. Триколор 7300 руб. Телекарта 3000 руб. с. Моргауши. Тел.: 8-906-385-29-30.** 7-10.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 5-10.


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Ильинка шкулĕ ноябрĕн 24-мĕшĕнче 150 çулхи юбилейне уявлать. Шкултан вĕренсе тухнисене, кунта ĕçленисене, пур чысла-сумлă çынна уяв кĕрекине 10 сехете чĕнет.**

* * *

**Продаются: крупные племенные гуси, можно тушками; кролики ризен; щенки немецкой овчарки. Также на продажу ноутбук DELL, МФУ Canon, автомобиль Приора хэтчбек недорого. Тел.: 8-927-66-55-900.** 1-2.

* * *

**Шурă тĕслĕ сурăхпа путеккисене сутатăп. Тел.: 8-927-842-33-41.**

* * *

**Требуются автомойщики муж. и жен. (до 40 лет) можно без опыта работы, з/п 10000–15000 рублей. Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 23 (территория «Сельхозтехники»). Тел.: 8-927-844-78-33.** 1-2.

* * *

**Икĕ ĕне сутатăп: пĕрремĕш пăруламалли хĕрлĕ-шурă, виççĕмĕш пăруламалли шурă-хĕрлĕ тĕслĕ. Тел.: 8-927-850-70-14.**

* * *

**Продаю автомашину ВАЗ-2104 2006 года выпуска, инжектор, небитый, плюс зимняя резина. Тел.: 8-906-383-21-30.**

* * *

**В швейную мастерскую в с. Б. Сундырь на постоянную работу требуются: швеи и швеи-закройщицы (трудовой договор). Тел.: 8-919-661-79-76.** 1-2.

* * *

**Организация примет на работу начальника АЗС, диспетчера АЗС для работы в с. Моргауши. Соц. пакет, оплата договорная. Тел.: 8-927-861-50-44.** 2-2.

* * *

**Меняю ВАЗ-2104 2002 года выпуска на бычка (живым весом 200-220 кг) или продаю. Продаю корову, 5 отел в феврале. Тел.: 8-927-865-41-24.**

* * *

**Муркашри «Чăваш пичечĕ» киоскра ĕçлеме киоскер кирлĕ. Тел. 8(835-2) 51-52-51.**

Мăшăрĕ, ывăлĕсемпе хĕрĕсем, çывăх тăванĕсем, кӳршисем Мăн Шаптак ялĕнче пурăннă хаклăран та хаклă

**Александр Федорович ФЕДОРОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки чун-чĕререн, тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин "Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла таварса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 20.11.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4689.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.